19-31
Бичур. чит.
11-20

Р. С. Ф. С. Р.

**Пĕтĕм тĕнҫери пролетарисем, пĕрлешĕр!**

# ИРĔКЛĔХ ЙУРРИСЕМ.

*Издание Чувашской секции Политического Отдела Реввоенисовета 5 армии.*

Хакĕ 60 пус.

КАЗАНЬ
Типо-литография Казанского Университета
1919

# Куммунистсен Марселйезĕ.

Тĕнҫипе револуутси тăватпăр,
Ҫураллăх сăнҫăрне ватрăмăр;
Пирĕн хĕрлĕ йалав вăл коммунă,
Тавлашасси пирĕн таса ĕҫ.
 Асапланса епир тунисене
 Ҫисе пурнакан ҫĕленсемпе
 Йулашки хут тăрса ҫапăҫмашкăн
 Вĕҫрен вĕҫĕн атăр, кĕр тăрар!
Хăйуллă, таса ҫĕреллĕ, хĕҫ, пăшал тытăр
Ҫынна пусмăрлакана сирпĕнтертĕр,
Пур пĕрех ҫăлăнăҫ, йе вилĕм пире.
Малалла, малалла, малалла, малалла.
 Тăвансем мĕлйунпа пирĕн пĕтрĕҫ,
 Тăлăх амăшсем йĕрсе йулҫĕҫ,
 Суранпа ҫухăнсем те макăрҫĕҫ,—
 Ҫаксенҫен тăшман камне пĕлĕр.
Ылттăна пуҫҫапса пурнакансем
Ҫаплă ҫуртсенҫе хăтăлаймĕҫ,
Куштанпа банк-хуҫине тавăрма
Хăруш сехет тин ҫитсе тăҫĕ.
 Хăйуллă . . .

Пирĕн вăйпа тăранакансене,
Халăха пусмăрлакансене,
Саватпа, кĕлĕ çурҫĕ тупăшпе
Мул пухса пурăнакансене,
Вĕсен намăссăр тупăшĕ пирки
Авалтан пирĕн йун тăкăнат,
Вăрçăра вилнисем, аккупра çĕрнисем
Пурте вĕсене тавăрăпăр.
Хăйуллă . . .

Усалсем тата пире йунаççĕ,
Анҫах вĕсем пĕтесси çитрĕ,
Вăрçăра вĕсене шеллемĕпĕр,
Хăйсем те пире шеллемерĕç.
Çапăçакан йулташ, ан шелле вĕсене,
Кайран пире ан улталанҫăр.
Авалхи кив тĕнҫе ваңҫĕкĕ çине
Хамăрăн çут çурта лартăпăр.
Хăйуллă . . .

Ĕçпе пиçсе хытнă аласемшĕн
Тĕнҫери пĕр ĕç те хăруш мар.
Никамăн кăсйи халăх тарĕпе
Малашне тулса хулăнланмĕ.
Ĕмĕтсĕр ултавçă пилсерленĕ,
Анҫах арҫине тултараймĕ,—
Ҫухăнсен ĕçлĕхлĕ коммунĕнҫе
Ни пуйанни, ҫухăнни пулмĕ.
Хăйуллă . . .

Пупсемпе улпутсен ушкăнне хирĕç,
Йун ĕçекен сĕлĕхсем çине,

Тĕнҫери пĕтĕм ҫухăн халăхем,
Пайсăр йулнисем, пурте тăрăр!
Тăрăр, ҫĕне пурнăҫ паттăрсем!
Асяп аҫисем, пурте тăрăр!
Йулашки хуг тăрса ҫапăҫмашкăн
Вĕҫрен вĕҫĕн атăр кĕр тăрăр!
Хăйуллă . . .

А. Милли куҫарнă.

---

## Марселйеза.

Авалхи тĕнҫерен уйăрлар-и,
Тăприне урараn силлер-и...
Ылттăн кўмирсем, пирĕн тăшмансем,
Патшан ҫўл ҫуртне курăймастпăр.
Асаплă халăхпа пĕрлешетпĕр,
Выҫă халăх патне кайатпăр:
Ылханатпăр пĕрле тăшмансене,
Ҫапăҫăпăр вара вĕсемпе.
Ей ĕҫлекен халăх, сиксе тăр-ха!
Тăшмана хирĕҫ тăр, выҫ тăван,
Халăх тарăхнă сас йанратăр-ха.
Малалла, малалла, малалла.
Епир йăвăр асаппа тупнине
Ĕмĕтсĕр пуйансем ҫаратаҫ:
Пирĕн тарпа вĕсем мăнтăрланҫĕҫ,
Йулашки татăка турткалаҫ.
Вĕсем савăнҫăр тесе выҫăхаттăр,
Сутў—илў туса ҫухăнсене

Вĕсем çăтçăр, пиртен мăшкалаççăр,
Тесе вĕсемшĕн выçăхса лар.
Ей ĕçлекен . . .
Епиар ĕмĕр хуйхăрни çитмест-им?
Тăнясем пурте харăс тăрар,
Дпяăртаь пуçласа Шур тинĕсçен,
Ателпа айакри Кавкасçен,
Вăреăсм, йытă—пуйансем çине,
Йун ĕçекен патша çине те:
Пĕгерер ылханлă усалсене,—
Ыр пурвăç çуталса тин тухĕ!
Ей ĕçлекен . . .
Етемсен тăванлăх, çăн хĕвелĕ
Йунлă вут хыçĕнçен çуталĕ,
Аçасене килĕшӳ, телейлĕх
Йулашки йун тăкса тупăпăр—
Ирĕклĕх ĕмĕрĕ вара килĕ,
Ултавпа усал пĕтĕç пуçĕпех,
Пĕтĕм халăхсем тинех пĕрлешĕç,
Таса ĕç патшалăхĕ тăвĕç.—
Ей ĕçлекен . . .

---

## Атăр харăсах, йулташсем.

Атăр харăсах, йулташсĕм!
Çапăçса вăйлăланар,
Хамăр кăкăрпа çĕмĕрсе
Ирĕк алăкне уçар (2 хут)

Халăх хушшинҫе ҫуралса
Ĕҫ ҫемйинҫе усрĕмĕр!
„Тăванлăхпа ирĕклĕхшĕн"
Епир ҫапăҫма хатĕр (2 хут)
Пире сăвҫăрпа усрарĕҫ,
Выҫлăхпата ҫунтарҫĕҫ;
Хурлăхлă кунсем ҫухалҫĕҫ,
Ҫапăҫмалли кун ҫитрĕ (2 хут)
Ĕҫе пуҫласа йатăмăр,
Ҫапăҫма ҫасрах васкăр;
Патшан мĕлке пек вăйенҫен
Хăри вара пирĕн ҫар? (2 хут)
Мĕн пур патшан вăй халҫĕ те
Ĕҫлекенсен аллинҫе.
Хамăр патрон тултаратпăр
Штык та хамăр лартатпăр (2 хут)
Епир тăвакан таса ĕҫ
Пуласине ĕненсе
Ҫуклăх ылханлă ҫĕклемпе
Хăрамасăр ҫапăҫар (2 хут)
Мĕн авалтанхи хĕнлĕхе
Сирпĕнтерсе йарăпăр,
Ĕҫлĕхĕн хĕрлĕ йалавне
Ҫĕре лартса хурăпăр (2 хут)

А. Милли куҫарна.

---

## Ҫăваш ҫухăнĕсен йурри.

Тăрар, ҫухăнсем,
Харăсах тăрар.

Тĕнҫе ҫавăрар—
Пĕҫҫĕр киввисем!
Мул асапĕнҫен
Атăр хăтăлар,
Хыт тăллисенҫен
Татса ыйткăнар.

Халиҫҫен макăрса
Тархаслярăмăр,
Куҫ—ҫуль йухтарса
Тинĕҫ турăмăр.
Пĕлĕт ҫинелле
Епир пăхрăмăр,
Турă йеннелле
Алла тăсрăмăр.

Пĕлĕт уҫăлмарĕ,
Манна ҫумарĕ,—
Епир выҫҫине
Турă курмарĕ.
Епир йĕнинҫен
Пуйан йĕрĕнҫĕ,
Ҫур пус ахальтен
Ывăтса паҫĕ.

„Пулат тĕнҫере,
Ырă ҫын йепле“,
Тесе мухтарĕ
Мĕскĕн пуйанне.
Пуйан пинĕце
Хăйне йĕртнине
Аса илмерĕ,
Анах тав турĕ.

Хăйсен пурлăхне
Тек сыхлаттарса
Ђухăнсен йунне
Тăкаç авалтан.

Типшĕм ђухăнсен
Алли—урипе
Çĕр шыв тĕпĕнђен
Пухаç мулсене.

Тĕнђе пулнăран
Сасси ђухăнăн
Пĕлĕте хăпарат,
Кăлăх тархаслат.

Тапла хуласем
Ђухăн тарринђен,
Тĕнђе пуйансем
Ђухăн йунĕнђен.

Выçахса ђирпе
Шăна пек вилет,
Шăршлă пӳлĕмре
Ĕмĕрĕ иртет.

Ђухăн йĕнине
Çĕрĕ те илтмест,
Пĕлĕт те пĕлмест,
Тинĕс те сисмест.

Çĕрĕ илтĕђĕ—
Пуйан аллинђе,
Пĕлĕт пĕлĕ-ђĕ—
Пупсен аллинђе.

Турăпа патша,
Темле пуçлăхта

Пире ҫăлаймĕҫ,
Телей параймĕҫ.

Тăрар, ҫухăнсем,
Пинĕ пе сиксе,
Тĕнҫе пуйансем
Ҫĕтреҫҫĕр пиртен!

Пур ҫут ҫанталăк
Пуйан аллинҫе,
Ҫутă рай алăк
Вĕсен кăсийинҫе.

Пĕтĕм тĕнҫери
Тутлă ҫимĕҫсем
Ун сĕтел тулли—
Пуйаншĕн вĕсем!

Ҫи хитре хĕрсем
Пуйан аллинҫе
Ҫаплă ăслисем
Унăн умăнҫе.

Ҫĕрĕн сĕткенне
Ĕмсе пурăнат,
Хайĕнҫен пуҫне
Никама курмаст.

Уҫĕ тĕнҫере
Сарăлса выртат
Ҫунне ҫиркӳре
Пупĕ тасатат.

Тăрăр, ҫухăнсем,
Пинĕне сиксе,
Тĕнҫе пуйансем
Ҫĕтреҫҫĕр пиртен!

Пуйан тĕнҫине
Салатса тăкар
Увăн никĕсне
Те ан хăварăр!

Пуйан тĕнҫине,
Хамăр тунине,
Тутанмарăмăр—
Мулшăн турăмăр.

Тĕрĕс марлăхпа,
Намăссăрлăхпа
Тулнă тĕнҫене
Ан шеллĕр пĕртте.

Мĕн пур ҫĕр ҫуна,
Ҫут ҫанталăка
Мул сăнҫĕрĕнҫен
Хăтăрса йарар.

Пĕтĕм ҫĕр ҫуна
Ирĕклĕх парар,
Ҫут—ҫанталăка
Хаваслантарар!

Ĕҫе хăнăхнă
Хыт аласемпе
Шаккавă йанă—
Тепĕр тĕнҫере.

Ҫухăн хăлăхсем
Хăйсемшĕн ĕҫлĕҫ
Тĕнҫе пуҫлăхсем
Мăлйунсем пулĕҫ.

Пуйан, ҫухăнни
Ун ҫухне пулмĕ,

Вăйли, халсăрри
Ун ђух илтĕнмĕ,
Çĕр хăй çимĕçне
Пур çынсене те
Тан парса тарĕ,
Йăлт тăрантарĕ.
Кураймасси те,
Тарăхасси те
Ун ђухне пĕтĕ
Сасси те пулмĕ.
Пĕр халăх çине
Тепри тапăнмĕ,
Йун тăкăннине
Никамта курмĕ.
Тинех çĕр çине
Йурату килĕ,
Унăн тутине
Етем тип пĕлĕ.
Хавасланнипе
Тĕнђе йуррине
Ђуна хăпартса
Йарĕç йурласа.
Тăрăр, ђухăнсем,
Мăлйунпа сиксе,
Пуйан тĕнђине
Тăкар салатса!
Тĕнђе туллипех
Ђухăн халăхсем,
Тĕнђе пуçлăхсем
Пулĕç вĕсемех!

А. Милли.

# Похоронный марш.

Есир халăха ҫĕререн йуратса
Тавлашса ҫапăҫса вилсе выртрар!
Халăх ирĕклĕхпе пурăнтăр тесе
Есир вăй ҫитнике туса хăвартăр.

Нўрлĕ тĕрмесенҫе хуйхăрса лартăр...
Пуҫа касакан сутйесем сире:
„Тимĕр тăлăсемпе кĕмсĕртеттерсе
Кайăр!" тесе тĕрĕс мар сут турĕҫ (2 хут).

Ывăлнăскер есĕ утса пыратăн,
Ал-ура сăнҫĕрĕ ҫанкăртатать.
Умăнти ҫеҫен хир ҫулĕ йеннелле
Вăрттăн хуйхăрса ес пăхатăн.

Хĕвел хĕртнипе сăнҫăрсем ăшăнҫĕҫ,
Сан ўтне ҫĕлен пек сăхса кĕҫĕҫ.
Сăнҫăрсем шăйăрнă суранусенҫен
Вĕри йуну сан ҫĕр ҫине тумлать. (2 хут).

Асап курнăшăн ес ўпкелеместĕн,
Савнă ĕҫшĕн хĕнсем куратăн;
Йулташу ҫуклăхпа пĕтсе ларнине
Тўссе тăмашкăн пултараймарăн.

Ҫăнлăх пуртăран хăватлăраххине,
Ушшăн хăвăн йунна йухтарнине,
Тивĕҫлĕ хисеппе хисеплессине
Таса ҫуну сан ĕненсе тăрать (2 хут).

Хăраса ўкнине пусарас тесе,
Тăшман ылттăн ҫуртра ĕҫсе ларать,
Анҫах хăрушă ал вăл, пĕтессине
Пĕлтерсе, тахҫанах ҫырса тăрать!

Пăхаттир пек вăйлă ирĕклĕ халăх
Тĕрĕсмарлăх пĕтсен сиксе тăрĕ!
Таса çулпа есир паттăрăн утрăр—
Тăвансем, тсе ăсататпăр срре (2 хут).

А. Милли куçарнă.

1. Коммунистсен Мәрселйезӗ.

2. Марселйеза.

3. Ат̆ăр харăсах, йулташсем.

4. Ђăвăш ђухăнсен йурри.

5. Похоронный марш.



мазурка

камаринская

клоун